28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945 ИЮНЬ 19 ЫТЛАРИКУН 117 (6868) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховный Совечĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

СССР НАУКА АКАДЕМИНЕ

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ СССР Наука Академине вăл 220 çул тултарнă ятпа саламлаççĕ.

СССР Наука Академийĕ хăйĕн юбилейне Совет халăхĕ нимĕç захватчикĕсене хирĕç пынă аслă Отечественнăй вăрçăра тăшмана пĕтĕмпех çĕнтернĕ кунсенче уявлать. Вăрçă кунĕсенче совет ученăйĕсем ăнăçлăн ĕçлесе пычĕç, вĕсем хăйсен ĕçĕпе фронта тата хамăр çĕршывăн халăх хуçалăхне пулăшса тăчĕç, Совет ученăйĕсем тăшмана аркатса тăкас тĕлĕшпе питĕ паха ĕçсем турĕç. Наука Академийĕн институчĕсенчи совет ученăйĕсем—физиксемпе химиксем, математиксемпе астрономсем, биологсемпе медиксем, географсем, историксемпе философсем, экономистсем, правоведсем тата филологсем—ăнăçлăн ĕçлеççĕ.

Пирĕн наука тĕнчене аслă ученăйсем пачĕ. Совет халăхĕ çак аслă ученăйсемпе тивĕçлипе мухтанать. Вĕсем — вырăс наукине пуçласа яракан Ломоносов, гениллĕ химик Менделеев, аслă математиксем Лобачевский, Чебышев тата Ляпунов, паллă геолог Карпинский, пĕтĕм тĕнчипе паллă географ Пржевальский, хирти çар хирургине пуçласа яракан Пирогов, аслă новатор-биологсем Мечников, Сеченов, Тимирязев тата Павлов, ўсентăрансен йăхне улăштарнă паллă Мичурин, çав тери ăста экспериментатор физик Лебедев, радио шухăшласа кăларнă Попов, хальхи авиаци теорине пуçласа яракансем Жуковскипе Чаплыгин, вырăссен революциллĕ шухăшне малалла вăйлатса пынă çав тери паллă Белинский, Добролюбов, Чернышевский, пирĕн çĕршывра марксизма пуçласа янă çав тери чаплă Плеханов.

ССР СОЮЗĔН ХАЛĂХ КОМИССАРĔСЕН СОВЕЧĔ.

Совет халăхĕ тĕнчене пирĕн эпохăри чи аслă гение, малта пыракан наука шухăшĕсен корифейне, марксизма аталанун çĕнĕ условийĕсене майлă вăйлатса ярса малалла илсе пынăскере, совет йĕркин никĕсне хурса кучухнехи обществăна социализмла обществăна куçарас теорие пуçласа янăскере, пирĕн совет государствине пуçласа яракан Ленина панипе тивĕçлипе мухтанать.

Пирĕн çĕршыври ученăйсем хăйсен открытийĕсемпе, изобретенийĕсемпе тата исследованисемпе пĕтĕм тĕнчери наукăпа обществăна аталантарас ĕçе темрен те хаклă паха пуянлăх хывреç.

Совет ученăйĕсем наукăпа техникăн нумай облаçĕсенче питĕ пысăк çитĕнўсем турĕç. Анчах та наука тĕлĕшпе ĕçлекен пур çынсен те яланах çакна астуса тăмалла: наукăра та техникăра та халĕ питĕ кирлĕ, анчах та татса паман ыйтусем татах нумай, совет ученăйĕсен çав ыйтусене тĕплĕн пĕлсе çитсе татса парас тесе пĕтĕм вăя хурса ĕçлемелле. Совет халăхĕ ученăйсем пирĕн наука умне пурнăç хăй кăларса тăратнă задачăсене ăнăçлăн татса парасса шанса тăрать.

ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ СССР Наука Академийĕ хăйĕн ĕçĕнче малашне те пирĕн хамăр çĕршывăн тата тĕнчери наукăн чи лайăх традицийĕсене вăйлăлатса пырасса, çав наукăн пĕлĕвĕсемпе СССР хуçалăхне тата халăхсен культурине кунран кунах вăйлатса пырас ĕçре туллин усă курасса, совет наукин чапне тĕнчери халăхсем хушшинче тата çўлерех çĕклессе шанса тăраççĕ.

ПĔТĔМ СОЮЗРИ КОММУНИСТСЕН (БОЛЬШЕВИКСЕН) ПАРТИЙĔН ЦЕНТРАЛЬНЫЙ КОМИТЕЧĔ.

СССР Наука Академийĕн юбилейлă сессийĕнче пулнисем— Оборонăн Государственный Комитечĕн Председательне, ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председательне И. В. СТАЛИН юлташа

Хаклă Иосиф Виссарионович,

СССР Наука Академийĕн юбилейлă сессийĕ, Наука Академийĕ 220 çул тултарнине уявлама пухăннăскер, Сире — Правительство пуçлăхне, Совет Союзĕнчи халăхсен çулпуçне, çĕршыври хĕçпăшаллă вăйсене ертсе пыракана, стратега тата полководеца саламлать.

Пĕрремĕш Петр Наука академине пуçарса янăранпа 220 çул тултарнине уявлани историллĕ çав тери пысăк событисен тапхăрĕнче пулса иртет, вăл событисем этемлĕх кунçулне татса параççĕ. Эсир ертсе пынипе Совет государстви Германи фашизмне хирĕç пынă пĕтĕм халăхăн Отечественнăй вăрçине çĕнтерўпе вĕçлерĕ. Паттăр Хĕрлĕ Çар Çĕнтерў ялавне Берлин çине çĕклесе лартрĕ, союзниксен çарĕсемпе пĕрле, тăшмана хăйĕн парăннă столицинче пĕр сăмахсăр паранни çинчен калакан акт çине алă пустарчĕ.

Отечественнăй вăрçă пуçланнă хăрушă кунсенче эсир палăртса хунă стратегиллĕ аслă шухăшсем пурнăçа кĕчĕç. 1941 çулхи июнĕн 22-мĕшĕнче пирĕн çĕршыва вăрă-хурахла тапăнса кĕнĕ фашистла нимĕç империализмĕ пĕтессипе çинчен эсир аслăн каласа пани пурнăçа кĕчĕ. Аслă вырăс халăхĕ, Совет Союзĕнчи мĕнпур халăхсен пуçĕнче тăрса, историллĕ çĕнтерў туса тăшмана парăнтарчĕ, çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне тата Октябрьти социализмлă революци çĕнтерсе илнисене упраса хăварчĕ.

Хĕрлĕ Çар Европăри цивилизацие фашистла аркатуçăсенчен çăлса хăварчĕ. Европăри халăхсем чураланассинчен тата пĕтсе пырассинчен сыхланса юлчĕç. Вĕсем хăйсен государственноçне, демократине тата нациллĕ культурине çĕнĕрен аталантарма май илчĕç.

Фашистсен тискерлĕхĕпе тиранине пĕтерни культурăпа наукăна чечеклентерме тата прогреса малалла аталантарма анлă майсем туса пачĕç.

Совет ученăйĕсемшĕн наука ĕçĕнчи тĕп принципсем вырăнĕнче тата социализмлă Тăван çĕршывшăн ĕçлессин тĕп принципĕсем вырăнĕнче ĕмĕр-ĕмĕрех Сирĕн теорипе революциллĕ практика пĕрлĕхĕ çинчен калакан çав тери чаплă шухăшсем, фетишсене пĕлмен малта пыракан наука, халăхпа таччăн çыхăнса тăракан наука, ĕçре ертсе пыракан наука çинчен калакан Сирĕн шухăшсем пулса тăраççĕ.

Сирĕн диалектикăллă тата историллĕ материализм пирки, наци ыйтăвĕ пирки, социализмлă государствăн теорийĕ пирки, çар стратегийĕпе тактики пирки çырнă классикла ĕçсем Маркспа Ленинăн вĕрентĕвĕсене малалла аталантарса, наукăра çĕнĕ тапхăр туса хучĕç, кучухнехи тĕпчев ĕçĕсем çине çав тери пысăк паллăлăх хăварчĕç. Наука творчествинче никам иртме пултарайман вăсере тăнă пирки совет ученăйĕсен пĕтĕм ăрăвĕсем вĕренсе пыраççĕ. Сире хисеплĕ академике суйлани СССР Наука академийĕн историнче çав тери паллă ĕç пулса тăчĕ, ăна çĕршыври пĕтĕм наука общественноçĕ пĕтĕм чун-чĕререн ырларĕ.

Халăха çутта кăларас тата наукăна аталантарас тĕлĕшпе Эсир куллен ĕçлесе пыни тата совет ученăйĕсен творчествăллă пуçарулăхне пулăшса пыни Совет Союзĕнче наука малалла аталанассин вăйлă факторĕ пулса тăрать. Çĕршыври малта пыракан ученăйсене Сталинла премисем памалли йĕрке туни ССР Союзĕнче наукăна аталантармалли питĕ хăватлă меслет пулса тăрать. Сирĕн ятăрпа тунă премии лауреачĕн аслă ятне илессине кашни совет ученăйĕ пысăк чыс вырăнне хурать.

Вырăс наукин центрĕ пулса тăракан СССР Наука академийĕн ĕçĕсене совет влаçĕ пуçланнă малтанхи кунсенченех Ленин—Сталин партийĕ пулăшса пырса унăн ĕçне тивĕçлĕ çулйĕрпе ăслăн ертсе пынă. Совет влаçĕ вăхăтĕнче наука академийĕ институтсен, лабораторисен тата станцисен çав тери пысăк наука пĕрлешĕвĕ пулса çирĕпленчĕ.

Эсир чĕннипе Отечественнăй вăрçă çулĕсенче Наука академийĕ хăйĕн пĕтĕм вăй-халне Тăван çĕршыва хаяр тата тискер тăшман тапăннинчен сыхлас ĕçе хыврĕ. Наука академийĕ Хĕрлĕ Çарăн хĕçпăшалне вăйлатас, промышленноçпа ял хуçалăхне аталантарас ĕçе пулăшса пычĕ. Нумай ученăйсем фронтсенче, Мускавпа Ленинград хулисене хўтĕлес ĕçе хутшăнчĕç.

Пирĕн Хĕрлĕ Çар фашизм çарĕсене çĕнтернĕ ятпа пулнă савăнăçлă тата аслă уяв институтсен, лабораторисен тата Наука академийĕн экспедицийĕсен наука ĕçĕсенче çĕнĕ çĕкленў пуçласа ячĕ. Академи 220 çул тултарнă ятпа пулакан юбилейлă савăнăç пĕтĕм совет наукин ăнăçлăхĕсене тата унăн центрĕн — Совет Союзĕнчи Наука академийĕн ăнăçлăхне кăтартса паракан, пире çĕнĕ çитĕнўсем тума хавхалантаракан уяв пулса тăрать.

ССР Союзĕнче Наука академине ĕçлеме çав тери лайăх условисем туса пани академи членĕсемпе унăн сотрудникĕсене теориллĕ тата прикладной наукăсем тĕлĕшпе малалла та пĕтĕм вăя хурса ĕçлеме, хамăр çĕршыври пуянлăхпа усă курас тĕлĕшпе çĕнĕ çулсем уçас енĕпе ĕçлеме хушать. Вăрçă кўрсе хăварнă сурансене хăвăртрах тўрлетес тĕлĕшпе, Совет Союзĕн çарпа экономика хăватне ўстерес тĕлĕшпе эпир пĕтĕм вăя хурса ĕçлеме пулатпăр.

Наука академийĕн академикĕсем, член-корреспонденчĕсем тата ученăйсен пĕтĕм коллективĕ малашне те малта пыракан совет наукине аталантарассишĕн кĕрешме, теорин çĕнĕрен çĕнĕ пайĕсене çĕнтерсе илме тата пирĕн Тăван çĕршывăн пĕтĕм тĕнчери историллĕ вырăнне тивĕçлĕ çĕнĕрен çĕнĕ ăнăçлăхсем тума сăмах параççĕ.

Сывă пултăр малта пыракан совет науки тата унăн чи лайăх представителĕсем!

Совет халăхĕшĕн ĕçлекен совет науки сывă пултăр!

Сывă пултăр çĕнтерўллĕ паттăр Хĕрлĕ Çар!

Сывă пултăр Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕ!

Сывă пултăр гениллĕ совет ученăйĕ, халăхсен çулпуçĕ—Иосиф Виссарионович Сталин!

СССР Наука академийĕн юбилейлă сессийĕн чаплă ларăвĕнче 1945 çулхи июнĕн 16-мĕшĕнче йышăннă.

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕн Заместительне, Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарне В. М. МОЛОТОВ юлташа

Хаклă Вячеслав Михайлович!

СССР Наука академийĕн вăл 220 çул тултарнă ятпа пухăннă сессийĕ Сире, аслă Сталинăн çывăх юлташне, хĕрўллĕ салам калать.

Эпир çав тери паллă кунсем пурăнса ирттеретпĕр. Совет халăхĕн фашистла нимĕç варварĕсене хирĕç пынă Отечественнăй аслă вăрçи çĕнтерўпе вĕçленчĕ. Совет Союзне хăрушă, шеллеме пĕлмен тата тискер тăшман тапăнчĕ. Пирĕн халăх, 1941 çулхи июнĕн 22-мĕшĕнче Совет правительствипе унăн пуçлăхĕн Сталин юлташăн ячĕпе Эсир каланине хапăл туса, хăйĕн юратнă Тăван çĕршывне хўтĕлеме пĕр çын пек харăс тăчĕ.

Хăйĕн гениллĕ Главнокомандующийĕ Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ ертсе пынипе Хĕрлĕ Çар фашистла нимĕç çарне шыçăн курман пек пысăк поражени тўстерчĕ, пирĕн союзниксен çарĕсемпе пĕрле ăна пĕтемпех аркатса тăкрĕ. Германие пĕр сăмахсăрах парăнтарчĕ.

Совет халăхĕ хăйĕн правительствин Эсир тытса пыракан сталинла тулашри политикине саванса пулăшса тăрать. Ку политика гитлерла Германие хирĕç пынă вăрçăра ирĕклĕхе юратакан халăхсен хăватлă союзне туса хума пулăшрĕ. Вăрçă пĕтнĕ хыççăн, хамăр çĕршывăн хăрушсăрлăхне упраса хăварас тĕлĕшпе, СССР-ăн государство интересĕсене сыхлас тĕлĕшпе, мир тытса пырассишĕн ĕçлекен пĕтĕм тĕнчери организаци туса хурас тĕлĕшпе тухса тăнă ответлă задачăсене пирĕн правительство пĕтĕм совет халăхĕ пулăшса тăнипе татса парать.

СССР Наука академийĕ вăрçă пуçланнă хыççăнхи пирвайхи кунсенчех хăйĕн пĕтĕм вăйне фронта пулăшас ĕçе, пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çарăн хĕçпăшалне лайăхлатас ĕçе, хамăр Тăван çĕршывăн экономикăллă хăватне ўстерес ĕçе хучĕ. Мирлĕ аталану тапхăрĕ пуçланнă май эпир хамăрăн пĕтĕм вăя нимĕç варварĕсем пирĕн халăх хуçалăхне тунă сиенсене хăвăртрах пĕтерес тĕлĕшпе ĕçлеме, хамăр юратнă çĕршывăн культурине пур майсемпе те хăпартас тĕлĕшпе ĕçлеме, теориллĕ тата практикăллă наукăсене аталантарас тĕлĕшпе ĕçлеме пулатпăр.

Хăйĕн йывăр тата кăткăс ĕçĕнче Наука академине партипе правительство пĕрмаях пулăшса пычĕç.

Эсир, Вячеслав Михайлович, Наука академийĕн ĕçĕсемпе яланах нумай интересленетĕр, хăвăрăн хаклă кăтартăвăрсемпе, ертсе пынипе академин ĕçĕсене тĕрĕс тата ăнăçлă туса пыма пулăшрăр. Отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче, 1941 çулхи хăрушă уйăхсенче Эсир академие Мускавпа Ленинградран инçери тыла куçарса кайма пулăшрăр. Инçери тылра пурăннă вăхăтра Наука академийĕ тĕрлĕ йывăр тата паха ыйтусем тăрăх час-часах Сиртен пулăшу ыйтатчĕ, вăл пулăшăва Эсир параттăрччĕ. Мускава тата Ленинграда таврăннă хыççăн, пушшех те халĕ, вăрçă пĕтнĕ хыççăн, академи умне питĕ паллă çĕнĕ ыйтусем тухса тăчĕç. Халĕ татах Эсир академие яланхи пекех çирĕп пулăшу парса тăратăр. Пирĕн академи ĕçĕсене яланах Эсир пулăшса тăнине эпир питĕ пысăка хурса хаклатпăр.

Наука академийĕ Сире, Вячеслав Михайлович, хамăрăн Тăван çĕршывăн ырлăхĕшĕн малашне те савăн пекех лайăх ĕçлесе пыма хĕрўллĕн сунать.

СССР Наука академийĕн юбилейлă сессийĕн чаплă ларăвĕнче 1945 çулхи июнĕн 16-мĕшĕнче йышăннă.

Вырăс халăхĕ тĕнчери культурăшăн тунă аслă ĕç

1945 çулхи июнĕн 16-мĕшĕ совет культурин историне чи паллă кунсенчен пĕри пулса кĕрсе юлать. Çак кун СССР Наука академийĕн академи пуçланнăранпа 220 çул тултарнă ятпа пухăннă сессийĕ уçăлнă. СССР Наука академийĕн юбилейне пирĕн çĕршывра мĕнпур халăх культурин праçникĕ вырăнне хурса, наукăпа ĕç историре пулман пек пĕрлешнин праçникĕ вырăнне хурса уявлаççĕ.

Академи юбилейĕ совет халăхĕ гитлерла Германие аслăн çĕнтернине уявланă вăхăтра пулса иртет. Çак çĕнтерўре совет ученăйĕсен творчествăллă пысăк ĕçĕ пур, вĕсем ырми-канми ĕçлесе фронта тата пирĕн халăха тăшмана аркатас ĕçре çав тери пысăк пулăшу пачĕç. Юбилейлă сессин чаплă ларăвĕнче СССР Наука академийĕн президенчĕ В. Л. Комаров çакна палăртса каларĕ: совет физикĕсем çĕнĕ йышши хĕçпăшал тумашкăн теори тĕлĕшĕнчен тата экспериментсем тĕлĕшĕнчен майсем туса пачĕç; математиксем артиллери валли, авиапипе боевой карапсем валли тĕрлĕ шутлав ĕçĕсене хăвăрт тумалли майсем туса пачĕç; химиксем взрыв тăвакан япаласем, сплавсем, эмел таврашĕсем тумалли çĕнĕ мелсем туса пачĕç; биологсем Хĕрлĕ Çара тата халăха тăрантармалли çĕнĕ ресурссем шыраса тупса пачĕç; медиксем çар медицинин çĕнĕ меточĕсемпе усă курса вуншар пин боецăн пурнăçне çăлса хăварчĕç.

Совет ученăйĕсем пирĕн Тăван çĕршывăн çутçанталăк ресурсĕсене оборона ĕçĕ валли мобилизацилес тĕлĕшпе питĕ активлăн хутшăнса ĕçлерĕç. Çакăн пек ырми-канми ăнăçлă ĕçленине пула, совет ученăйĕсем тĕнчери цивилизацине культура ĕçне çав тери пысăк пуянлăх хыврĕç: вĕсем мухтавлă Хĕрлĕ Çара Германи империализмĕн тĕп вăйĕсене аркатса тăкма пулăшрĕç, çапла вара этемлĕх культури темиçе ĕмĕр хушшинче тунă мĕнпур çитĕнўсене пĕтерсе тăкассипе хăратса тăракан гитлерла фашизма тĕпренех пĕтерсе тăкмалли майсем туса пачĕç. Совет ученăйĕсем хăйсен Тăван çĕршывне тивĕçлĕ пулчĕç. ССР Союзĕнчи халăхсен историллĕ миссине, чи малтанах аслă вырăс халăхне тивĕçлĕ пулчĕç.

Совет ученăйĕсем этемлĕхшĕн тунă çак çитĕнўсем вырăс наукин традицийĕсене тивĕçлĕ пулса тăраççĕ, мĕншĕн тесен вырăс науки вăл яланах малта пыракан вăй тата тĕнчери прогреспа культурăна малалла илсе пыракан хăватлă вăй пулса тăнă.

Вырăс наукин деятелĕсем яланах пирĕн халăхăн, пирĕн историн чаплăхĕ те мухтавлăхĕ пулнă. Вĕсен ячĕсемпе тĕнчери наукăн аслă çитĕнĕвĕсем, хальхи вăхăтри культурăпа цивилизацин наука тĕлĕшĕнчи чи паха открытийĕсем çыхăнса тăраççĕ. СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ СССР Наука академийĕн юбилейлă сессине ăшшăн саламласа чĕнсе каланинче вырăс халăхĕн чаплăхĕпе мухтавлăхĕ пулса тăракан çак ятсене асăннă:

«Пирĕн наука тĕнчене аслă ученăйсем пачĕ. Совет халăхĕ çак аслă ученăйсемпе тивĕçлипе мухтанать. Вĕсем—вырăс наукине пуçласа яракан Ломоносов, гениллĕ химик Менделеев, аслă математиксем Лобачевский, Чебышев тата Ляпунов, паллă геолог Карпинский, пĕтĕм тĕнчипе паллă географ Пржевальский, хирти çар хирургине пуçласа яракан Пирогов, аслă новатор-биологсем Мечников, Сеченов, Тимирязев тата Павлов, ўсентăрансен йăхне улăштарнă паллă Мичурин, çав тери ăста экспериментатор физик Лебедев, радио шухăшласа кăларнă Попов, хальхи авиаци теорине пуçласа яракансем Жуковскипе Чаплыгин, вырăссен революциллĕ шухăшне малалла вăйлатса пынă çав тери паллă Белинский, Добролюбов, Чернышевский, пирĕн çĕршывра марксизма пуçласа янă çав тери чаплă Плеханов».

Вырăс халăхĕ тĕнчене пирĕн эпохăри чи аслă гение, малта пыракан наука шухăшĕсен корифейне, совет государствине пуçласа яракан Владимир Ильич Ленина пачĕ.

Ленин пуçласа янă совет влаçне, государствăн çĕнĕ форми пулса тăраканскерне, СССР Наука академийĕн халь пулса иртекен юбилейлă сессийĕнче мĕнпур эпохăсенчи чи открытисенчен чи асли вырăнне хурса палăртнă. Çак открыти ĕнтĕ чĕрĕк ĕмĕр хушшинчех кивĕ, кая юлнă Российăран социализмлă индустриллĕ — колхозлă аслă держава туса хума май пачĕ, совет системи çинче никĕсленсе пырса кучухнехи обществăна социализмлă общество туса улăштармалли çулсем тупма май пачĕ.

Наука академийĕн юбилейлă сессийĕ наука корифейĕн, аслă шухăшсен çыннин, государствăн аслă деятелĕн тата полководецăн Иосиф Виссарионович Сталинăн рольне патриотла мухтавлăхпа палăртса хăварчĕ. Наукăллă коммунизмăн никĕсне хывакансем Маркспа Энгельс, Ленин сăмахĕпе каласан, «рабочи класа хăйсене пĕлме тата хăйсене ăнланса илме вĕрентнĕ пулсан, ĕмĕтсем вырăнне наукăна лартнă пулсан», Ленинпа Сталин вара çĕнĕлле государство туса хучĕç, ку государствăра государство строительстви никĕсĕнче наука тăрать, чи малта пыракан наукăллă теори — Марксăн, Энгельсăн, Ленинăн, Сталинăн вĕрентĕвĕ—халăхăн практикăри мĕнпур ĕçне ертсе пыраканни пулса тăрать. Пирĕн тапхăрти чи аслă ученăйсем Ленинпа Сталин хăйсен ĕçĕсемпе наукăна пуянлатаççĕ, обществăллă наукăсен мĕнпур аталанăвне, пирĕн обществăн мĕнпур аталанăвне малтанах палăртса параççĕ.

Совет правительстви тата пирĕн партин Центральный Комитечĕ хăйсен саламĕнче çакна палăртрĕç:

«Пирĕн çĕршыври ученăйсем хăйсен открытийĕсемпе, изобретенийĕсемпе тата тĕпчевĕсемпе пĕтĕм тĕнчери наукăпа обществăна аталантарас ĕçе темрен те хаклă пуянлăх хыврĕç».

Çак пуянлăх ĕнтĕ наука социализм строительствин практикипе питĕ таччăн çыхăнса пынинче, Ленинăн-Сталинăн идейисене пурнăçа кĕртнинче, совет ученăйĕсем халăх хуçалăхĕ умĕнче тăракан задачăсене татса парас ĕçе активлăн хутшăннинче палăрса пырать. Совет ученăйĕсен çитĕнĕвĕсем вĕсем—большевиксен партийĕ, Совет правительстви, Сталин юлташ хăй наука пирки çав тери тăрăшнин результачĕсем пулса тăраççĕ.

СССР Наука академийĕн президенчĕ В. Л. Комаров юбилейлă сессие уçнă чухне каланă хăйĕн сăмахĕнче çакна палăртса хăварчĕ: совет ученăйĕсем иртние асра тытаççĕ тата пулассин çине шанчăклăн пăхаççĕ, малашне мĕн тери пысăк ĕçсем тăвассине ăнланса илеççĕ. Вырăс науки тĕнче культуришĕн питĕ пысăк ĕç тунă. Унăн мухтавлă та таса традицийĕсене вырăс наукин никĕсне хывакан Ломоносов пуçласа янă. Çав традицисене малалла аталантарса тата йышлăлантарса пырса совет науки этемлĕхе малашне те пуянлатĕ, пирĕн халăха çĕнĕ открытисем туса татах та мухтавлăрах тăвĕ. Çав открытисем, сталинла аслă эпохăна тивĕçлĕскерсем, нумай та кăткăс задачăсене, пурнăç хăй кăларса тăратнă, пирĕн аслă Тăван çĕршывăн интересĕсем кăларса тăратнă задачăсене ăнăçлăн татса парĕç.

СССР Наука академийĕ 220 çул тултарнине уявлани

СЕССИЕ ПУХĂННА ÇЫНСЕМ КРЕМЛЬРЕ ТАТА СТОЛИЦĂРИ МУЗЕЙСЕНЧЕ ПУЛНĂ

СССР Наука академийĕн юбилейлă сессине пухăннă çынсем июнĕн 17-мĕшĕнче ирхине столицăри паллă япаласемпе тата историллĕ памятниксемпе паллашнă.

Ученăйсем ирхине Кремле экскурсие кайса килнĕ. Советăн наука учрежденийĕсен делегачĕсем тата ют çĕршывсенчен килнĕ хăнасем Кремльри Аслă двоpeцpa, Грановитăй палатăра тата Хĕçпăшал палатинче, Андреевски тата Георгиевски залсенче пулса курнă, Кремльри архитектура тĕлĕшĕнчен историллĕ памятниксемпе паллашнă. Экскурсантсене П. Л. Капица, А. Н. Фрумкин, Б. Н. Юрьев академиксем ертсе пынă.

Çав кунах ученăйсем Государствăн Историллĕ музейĕнче пулса курнă. Ют çĕршывсенчен килнĕ ученăйсем музея курма пыракан çынсем çырса хăвармалли кĕнеке çине ушкăнпа çапла çырнă: «Мĕн курни пире питĕ кăмăла кайса хавхалантарчĕ. Эпир вырăс халăхĕн темиçе ĕмĕр хушшинчи культурин пуян памятникĕсене курнишĕн хамăра питĕ телейлĕ тесе шутлатпăр».

Июнĕн 17-мĕшĕнче юбилейлă сессие пухăннă çынсем В. И. Ленин музейне кĕрсе курнă. Çывăх кунсенчех сессие пухăннă çынсене В. И. Ленин музейĕн пур залĕсене те кăтартассине организацилеççĕ.

Июнĕн 18-мĕшĕнче столицăри театрсенче ученăйсене чысласа спектакльсем лартма тытăнаççĕ. Чи малтан хăнасем государствăн академиллĕ Пысăк Театрĕнче пулаççĕ. Хăнасене Глинка композиторăн «Иван Сусанин» оперине кăтартаççĕ. (ТАСС).

Иккĕмĕш кварталта укçа-тенкĕ пухмалли плана тултарнă

МУРКАШ. (Телефонпа). Районри финанс работникĕсем, чăваш халăх уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса, II-мĕш кварталта укçа-тенкĕ пухмалли плана июнĕн 10-мĕшĕ тĕлне тултарма пулнăччĕ. Ăмăртура чăннипе те тăрăшса ĕçлесе, финанс работникĕсем плана июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне 119 процент тултарчĕç. Иккĕмĕш кварталшăн укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе Пашалукасси, Сятракасси, Шурча, Атапай, Тивĕш ял Совечĕсем уйрăмах тимлĕн ĕçлерĕç. Вĕсем кварталти плана срокчен тата ытлашшипех тултарчĕç. Пашалукасси ял Совечĕ пур тĕрлĕ парăмсене те пухса çитернĕ.

Анчах та Матьак, Шĕвĕк тата Панкли ял Совечĕсем укçа-тенкĕ пухас ĕçре юлса пыраççĕ. Ку ял Совечĕсем çак квартал планне çуррине яхăн çеç тултарнă.

Ф. МАЛЫШКИН.

АСЛĂ НАГРАДĂШĂН ХАВАСЛАНСА

Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводри комсомолецсемпе çамрăксем Пĕтĕм Союзри çамрăксен Ленинла Коммунистла Союзне Ленин орденĕпе наградăланă хыпара пысăк хаваслăхпа кĕтсе илчĕç. Çав майпа заводри пур цехсенче те комсомолецсемпе çамрăксен митингĕсем пулса иртрĕç.

Каневский тата Оржебовский юлташсем начальник пулса ĕçлекен цехсенчи митинга комсомол комитечĕн секретарĕ Коган юлташ уçрĕ. ВЛКСМ Обкомĕн секретарĕ Бочков юлташ Ленинла-Сталинла комсомола Ленин орденĕпе наградăланă ятпа çамрăксене хĕрўллĕн саламларĕ. Çак аслă наградăна,—терĕ вăл,—комсомола Отечественнăй вăрçă çулĕсенче Тăван çĕршывăн питех те паха ĕçсем тунăшăн тата совет çамрăкĕсене Тăван çĕршыва пĕтĕм чĕререн парăнса ĕçлеме вĕрентес тĕлĕшпе тунă çитĕнўсемшĕн панă.

— Ленинла-Сталинла комсомола хамăр Тăван çĕршывшăн, хамăр халăхшăн тунă чаплă ĕçсемшĕн аслă орденпа наградăлани пире çав тери савăнтарать, тата лайăхрах, тухăçлăрах ĕçлеме вăй-хăват хушать. Эпĕ кварталти задание июнĕн 20-мĕшĕ тĕлне тултарма пулатăп,—терĕ комсомолец стахановец Мармерис юлташ.

Комсомолецсемпе çамрăксен бригадин бригадирĕ Люминарская юлташ çамрăксем тата лайăхрах ĕçлеме хавасланни, июнь уйăхĕнчи программăна 300 процентран кая мар тултарма пулни çинчен пĕлтерчĕ.

Юлашкинчен комсомолецсемпе çамрăксене цех начальникĕ Каневский юлташ саламларĕ. Вăл аслă награда çине ответлесе тата лайăхрах ĕçлеме чĕнчĕ.

„Орденлă Чăваш республики" ятлă фильм

Иртнĕ уйăхра Куйбышев хулинчен документлă фильмсен студийĕнчен «Орденлă Чăваш республики» ятлă кинокартина ўкерме О. Покровский режиссер, И. Мотков оператор, ўкерекенсен ушкăнĕн директорĕ Б. Бобков юлташсем Шупашкара килнĕ.

Пулас картинăн сценарине чăваш драматургĕ И. Максимов-Кошкинскипе О. Покровский çырнă.

Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче Чăваш республикинче ўкернĕ кинодокументсем пурте çак картинăна кĕреççĕ.

Картина икĕ вариантлă пулать. Пĕри чăвашла, тепри вырăсла. Чăвашла вариантне юбилей уявĕнче кăтартаççĕ. Иккĕмĕш вариантне юбилей уявĕнче ўкернĕ кадрсем те кĕреççĕ. Ăна Совет Союзĕнчи кинотеатрсенче кăтартма тăваççĕ.

Картинăпа чăваш композиторĕсен Ф. Павловăн, Г. Хирбюн, А. Орлов-Шусăмăн, Ф. Лукинăн, Лебедевăн юррисемпе илемлетеççĕ.

Юррисене Чăвашсен Государство Филармонийĕн хорĕ Ф. Лукин дирижер пулса ертсе пынипе юрласа парать.

АЛЬМАНАХĂН ÇĔНĔ НОМЕРĔ

Уяв кунĕсем тĕлне Чăваш совет писателĕсен Союзĕ кăларакан «Тăван Атăл» альманахăн 21—22 номерĕ пичетленсе тухать. Ку пĕрлештернĕ номерте çакăн пек произведенисем пулаççĕ: А. Ĕçхĕлĕн «Çĕрпе кăвак тўпе» пьеси, Л. Агаковăн «Вилĕмрен те вăйлăрах» повеçĕ, Ф. Уярăн «Пăлхав» ятлă историллĕ повеçĕн малтанхи пайĕ, В. Давыдовăн—«Чемен» поэми сыпăкĕсем, А. Грибоедовăн, «Ăса пула инкек» комедийĕн юлашки пайĕсем, Н. Тукташ, В. Ахтубай т. ыт. поэтсен сăввисем, А. Ĕçхĕл, А. Кăлкан, П. Золотов юлташсем чăваш литературипе искусстви тата кĕнеке кăларас ĕç 25 çул хушшинче епле аталанса пыни çинчен çырнă статьясем.

Альманах Чăваш республикин 25 çул хушшинчи ўсĕмĕсем çинчен каласа паракан пысăк статьяпа уçăлать. Ăна ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ М. А. Андреев çырнă.

СТЕНА ХАÇАЧĔ 15 ÇУЛ ТУЛТАРНĂ

БУСЛАВККА. «Ударник» колхозра «Колхозник» ятлă стена хаçачĕ 15 çул пĕр чарăнмасăр тухать. Стена хаçат тухма пуçланăранпах хаçат редакторĕ пулса Н. Соловьев юлташ ĕçлет. Çак тăрана çитиччен 888 номер стена хаçачĕ тухнă. 1945 çулта кăна 12 номер кăларнă.

Колхозниксем хăйсен стена хаçатне юратаççĕ, ушкăнпа пухăнса вулаççĕ. Соловьев юлташ колхоз ĕçĕнче те тăрăшса ĕçлет, стахановецсен шутĕнче тăрать.

Отечественнăй аслă вăрçă çулĕсенче хаçат çине фронтовиксем те йышлăн çырса тăнă. Ялти шкул преподавателĕ пулнă К. Павлов, колхоз председателĕ пулнă А. Васильев, колхоз платникĕ пулнă Д. Черкасов, колхозник В. Шмелев юлташсем хаçат валли фронтран çырусем ярса тăнă, колхозниксене вăйлă тырпулшăн кĕрешме чĕннĕ.

Докладчиксемпе агитаторсем валли

Чăваш халăхĕн искусстви

А. КАЛГАН
Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Искусство ĕçĕсен Управленийĕн начальникĕ

Октябрьти социализмлă революциччен чăвашсен профессиллĕ искусство пулман. Çав вăхăтрах чăваш халăхĕн художествăллă пултарулăхĕ аталанмалăх калама çук пуян пулнине эпир аван пĕлетпĕр. Тĕрлĕрен уявсем, ака-туйсем, вăйăсем никăçан та юрă-ташăсăр, вăйă-кулăсăр иртмен. Анчах ĕлĕкхи саманара патша тĕрĕ-шарисенчен çатра-çырмасенче, уна варĕсенче пытанса пурăннă чăвашсен. тĕттĕмлĕхре, выçлăхра, хĕнхурта асапланса пурăннă халăхăн юррисем уçăмлăн янрама пултарайман. Çавăнпа ĕççыннисем патша тытăмне хирĕç, пĕтĕм пусмăрлăха хирĕç темиçе ĕмĕр хушши хаяррăн кĕрешни пĕр вăхăтрах культурăшăн, ăна халăх ырлăхĕ туса хурса малалла аталантарассишĕн кĕрешни те пулса тăнă. Ахальтен мар ĕнтĕ çăлкуç пек тапса тухнă халăх пултарулăхĕ. Октябрьти революци хыççăнах вуншар, çĕршер тĕрлĕ форма тупса, анлăн сарăлса каять. Пур çĕрте те — ялсенче, шкулсенче, фабрикăсемпе заводсенче художествăллă пултарулăх кружокĕсем шăтса тухаççĕ. Çав кружоксене пиншерĕн çÿрекен талантлă чăваш ĕççыннисем хăйсен тăван искусстви хăвăрт ÿссе чечекленме пултарнине кĕске вăхăтрах кăтартса параççĕ. Халăх хушшинче уйрăм коллективсем, уйрăм артистсем, поэтсем, художниксем, композиторсем пăлăраççĕ. Совет влаçĕ пуçлансан икĕ уйăхранах Хусан хулинче чăвашсен профессиллĕ пĕрремĕш театрĕ уçăлать.

1920 çулта Чăвашсен Автономиллĕ облаçне тунă хыççăн чăваш совет искусствине малалла ÿссе чечекленме татах та лайăхрах майсем пулса тăраççĕ. Халĕ ĕнтĕ чăвашсен культурăллă вăйĕсем Шупашкара—Чăваш çĕршывĕн тĕп хулине турттăнаççĕ. Кунтах илемлĕ литература кĕнекисем, хаçат-журналсем пичетленсе тухма тытăнаççĕ. Часах чăваш театрĕ те Хусантан кунта куçса килет. Искусство коллективĕсене ÿсме, вăл вăхăтра Шупашкарта пĕрин хыççăн, тепри уçăлса пыракан тĕрлĕрен шкулсем те нумай пулăшаççĕ. Педтехникумра, совпартшкулта, рабфакра тата ыттисенче те драмкружоксем, хоркружоксем йĕркеленеççĕ. Педтехникумри чăваш хорĕ, В. П. Воробьев ертсе пынипе, 1923 çулта Мускава ял хуçалăхĕн Пĕтĕм Российăри пĕрремĕш выставкине каять. Çавăн чух ĕнтĕ пирĕн аслă çĕршывăн тĕп хулинче пурăнакан ĕççыннисем чăваш халăхĕн юррисене пĕрремĕш хут илтеççĕ.

Çав çулсенчех Шупашкарта музыка шкулĕ уçăлать. 1924 çулта чăвашсен паллă композиторĕн Ф. П. Павловăн «Сăрнай» ятлă юрă кĕнеки пичетленсе тухать. Драматургсем чылай çĕнĕ пьесăсем çыраççĕ. Музыка шкулĕ çумĕнче Ф. П. Павлов композитор. В. П. Воробьевпа пĕрле. чăваш хорне организацилет, каярахпа вăл Чăвашсен государство хорĕ пулса тăрать. 1938 çулта çав хортан Чăвашсен юрăпа ташă государство ансамблĕ тухса хураççĕ.

Çапла художествăллă пултарулăх кружокĕсенченех искусствăн профессиллĕ коллективĕсем çуралса тухаççĕ. Каярахпа вĕсенчен чăваш совет искусствин илемĕпе мухтавĕ пулса тăнă художествăллă вăйсем ÿссе çитĕнеççĕ.

Чăваш республики утса тухнă 25 çул хушшинче чăваш халăхĕн искусстви вăйлăн ÿссе аталанчĕ. Вăл республикăри ĕççыннисен анлă массисене илемлĕ тата культурăллă воспитани памалли чи пал[illegible] майĕсенчен пĕри пулса тăчĕ.

Чăваш искусствине малалла ăнăçлăн ÿстерес тĕлĕшпе условисем тунă паллă мероприятисенчен пĕри — сталинла пилĕкçуллăхсем вăхăтĕнче художествăллă вăтам шкулсем: театральнăй, музыкальнăй, художественнăй техникумсем уçни пулса тăрать. Çак шкулсенчен 1936 çултан пуçласа 1941 çула çитиччен кăна 200 çын ытла артистсем, музыкантсем, композиторсем, режиссерсем, художниксем пулса вĕренсе тухнă.

Мускавра, Луначарский ячĕпе тăракан театральнăй институт çумĕнче, тăваттăмĕш çул ĕнтĕ Чăваш драмстудийĕ ĕçлет. Саратоври Консерватори çумĕнче. вăрçă вăхăтне пăхмасăрах, чăвашсен опера студине уçнă.

Чăвашсен государство академи театрĕ формализмлă тата натурализмлă чир-чĕрсенчен тасалса пырса. творчествăллă тĕрес ÿсĕм çулĕ çине—реализмлă совет искусствин ÿсĕм çулĕ çине тăчĕ. Ун репертуарĕ чăваш драматургине чылай çÿле сĕкленĕ паха пьесăсемпе пуянланчĕ. Ф. П. Павловăн «Ялта», П. Н. Осиповăн «Кушар», «Айтар», К. В. Иванов поэми тăрăх А. Кăлганпа В. Алагер çырнă «Нарспи», Ухсайăн «Тутимĕр», С. В. Элкерĕн «Хĕн-хур айĕнче» поэми тăрăх çырнă «Чакка» тата ытти пьесăсем чăваш ĕççыннисен юратнă пьесисем пулса тăчĕç. Çавăнпа пĕрлех театр вырăс классикĕсен тата совет драматургĕсен чăвашла куçарнă пьесисене те пысăк пултарулăхпа лартса парать. А. Н. Островскин «Бедность не порок», «Василиса Мелентьева», «Гроза», М. Горькин «На дне», «Егор Булычев», «Васса Железнова», Корнейчукăн «Платон Кречет» тата ытти спектаклĕсем те театр коллективĕшĕн творчествăллă пысăк çĕнтерÿ пулса тăраççĕ.

Театрта вырăс труппи те чăмăртанса çитсе, чылай пысăк çитĕнÿсем тăвать. Çак сăмахсене 1940 çулта вырăс коллективĕ Треневăн аслă Ленин образне кăтартса паракан пьесине ăнăçлăн лартса пани тата ытти паха спектакльсем те уççăнах çирĕплетеççĕ.

Пирĕн композиторсем ĕнтĕ юрăсем çеç мар, пысăк формăллă произведенисем те çырма пуçларĕç. Чăвашсен пĕрремĕш музыкăллă комедийĕ «Хаваслăх» çуралать. Унăн музыкине Кривоносов композитор çырнă. Вăхăтсăр вилнĕ талантлă композитор Геннадий Воробьев симфони тата сюита çырса хăварнă. Ленинград композиторĕ Иванишин, чăваш музыкине чунтан юратса, унăн мотивĕсем тăрăх симфони тата «Нарспи» ятлă пĕрремĕш опера çырнă. Ун икĕ пайне Чăваш республики 20 çул тултарнă уяв вăхăтĕнче лартса панăччĕ. Анчах ирсĕр нимĕç фашисчĕсем пирĕн тăван çĕршыва тапăннă пирки, Иванишин хăйĕн пархатарлă ĕçне вĕçне çитичченех туса пĕтерейменĕ. Вăл Мускав хулине хÿтĕленĕ çĕрте вилнĕ Кривоносов композитор пекех, ополченец пулса, Ленинград хулине нимĕçсенчен хÿтĕлеме каять те унта паттăрла пуçне хурать.

Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче искусство работникĕсем хăйсен тивĕçлĕ вырăнне йышăнса тăчĕç. Актерсем сулăмлă сăмахпа, композиторсем патриотизмлă музыкăпа, художниксем кĕрешÿве чĕнекен картинăсемпе тата çивĕч шухăшлă плакатсемпе Хĕрлĕ Çар воинĕсене фронтра паттăррăн çапăçма, тылри работниксене геройла ĕçлеме хавхалантарса пычĕç.

Пирĕн орденлă республикăри нумай артистсемпе музыкантсем, композиторсемпе художниксем, драматургсем вăрçăн малтанхи кунĕсенчех юратнă тăван çĕршыва урнă нимĕçсенчен хÿтĕлеме фронта тухса кайрĕç. Вĕсенчен нумайĕшĕсем нимĕç вăр-хурахĕсене хирĕç хăюллăн та паттăррăн çапăçнăшăн Совет Союзĕн орденĕсемпе медалĕсене икшер-виçшер хут та илме тивĕçлĕ пулчĕç. Мускаври театр институчĕ çумĕнчи чăваш драмстудийĕнче вĕренекенсем хушшинчен çеç 10 студента «Мускава хÿтĕленĕшĕн» медальпе наградăланă.

Ленинградри Художество Академийĕнчен вĕренсе тухнă чăваш художникĕ Василий Макаров. нимĕç тискер кайăкĕсене хирĕç хĕçпăшалпа çапăçнă хушăрах, паттăр боецсемпе офицерсен портречĕсене карандашпа ÿкере-ÿкере илнĕ тата тĕрлĕрен сăрпа илемлĕ те паха картинăсем çырнă. Украинăри 2-мĕш фронтри художниксен выставкинче В. Макаров çырнă портретсемпе картинăсем пĕрремĕш вырăн йышăннă. Кун пек паха тĕслĕхсем татах та кăтартса пама пулать.

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пынă Отечественнăй вăрçă, йывăрлăхсем кÿчĕ пулин те, чăваш искусствин тылри работникĕсен творчествăллă ĕçне чакармарĕ. Пирĕн республикăри артистсем, художниксемпе композиторсем, драматургсем, совет искусствин ытти мĕнпур работникĕсемпе пĕрлех, творчествăллă тулли пурнăçпа пурăнаççĕ. Чăвашсен Государство Академи театрĕ, 1943 çулта хăй 25 çул тултарнине уявланăскер, икĕ коллективпа пĕрле çак вăрçă вăхăтĕнче 40 яхăн çĕнĕ спектакль лартса панă. Çав шутра чăваш драматургĕсем çырнă пьесăсем: Айзманăн «Лиза Короткова», «Тăван Çĕршывшăн», Мранькан «Сержант Ванюшин», Максимов-Кошкинскин «Сенкер двойка» тата ытти те. Вырăсларан куçарса лартнисенчен чи малтан Шекспирăн «Отелло» трагедине асăнмалла. Чăваш театрĕ. ăна лартса, творчествăллă пысăк çĕнтерÿ турĕ. Ун урлă пирĕн театрта чăн-чăн талантлă артистсем пурри, вĕсенчен нумайĕшĕ пысăк мастерсем пулса çитни уççăн палăрчĕ. (Отелло—И. О. Молотов, Яго—Б. А. Алексеев, Дездемона—Р. Ананьева) Çавăн пекех Островскин—«Вăрман». Мдиванин—«Фронта панă приказ» ятлă пьесисене те театр пултаруллăн лартса пачĕ.

Вырăс труппи те вăрçă вăхăтĕнче нумай паха спектакльсем кăтартрĕ. Вăл шутра—Н. Погодинăн «Кремлевские куранты». К. Симоновăн «Парень из нашего города», «Русские люди»; Л. Леоновăн «Нашествие», Островскин «Бесприданница», Гоголĕн «Ревизор», Бомаршен «Севильский цирульник», Грибоедовăн «Замужняя невеста» т. ыт. те.

Вăрçă вăхăтĕнче пирĕн театр ялăх мар ĕçленине çак цифрăсем те кăтартса параççĕ: 1940 çулта икĕ труппа пĕрле пурĕ 370 спектакль лартнă, вĕсене 73 пин çын курнă пулсан, 1942 çулта театр 539 спектакль лартнă, вĕсене курма 201.300 çын пынă.

Шупашкарта ĕçленисĕр пуçне, театр коллективĕсем кашни çулах республикăри ытти хуласене тата колхозсемпе район центрĕсене тухса çÿреççĕ. Тĕслĕхрен, чăваш труппи иртнĕ çулла çеç виçĕ бригадăпа республикăри 238 колхозра пулса, 272 спектакль лартса панă, вĕсене курма 72.830 çын пынă. Кунсăр пуçне. театр коллективĕсем, филармони коллективĕсемпе пĕрле, мĕн вăрçă пуçланнăранпах Хĕрлĕ Çар боецĕсемпе командирĕсем хушшинче (фронтра, призыв пункчĕсенче, госпитальсенче) пысăк ĕç туса пычĕç. Пирĕн художествăллă коллективсем шеф йĕркипе пурĕ 2 пин ытла спектакль тата концерт панă. Ку тĕлĕшрен уйрăмах Чăвашсен юрăпа ташă ансамбльне палăртса хăвармалла.

Композитор Ф. М. Лукин ертсе пыракан юрăпа ташă ансамблĕ 1943 çул пуçламĕшĕнче виçĕ уйăха яхăн фронтра çÿресе килчĕ. Калинин тата Брянск фрончĕсенче пулса, вăл Хĕрлĕ Çар боецĕсемпе офицерĕсем валли пурĕ 128 концерт панă. Асăннă фронтсен командованийĕсем ансамблĕн пархатарлă ĕçне тивĕçлĕн хакланă тата кашни артистах приказпа тав тунă. Фронтран таврăннă хыççăн, ансамблĕн творчествăллă çитĕнĕвĕсене палăртас майпа, ун художествăллă руководительне тата чи лайăх артистсене Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕ Хисеплĕ ятсем тата грамотăсем парса награждаларĕ.

Чăваш художникĕсен пысăк ĕçне те, уйрăмăнах вĕсен вăрçă вăхăтĕнчи ĕçне, палăртмасăр иртсе кайма çук. Çак иртнĕ 4 çул хушшинче кăна, Чăваш республикинче пурăнакан художниксемпе скульпторсен çĕнĕ произведенийĕсене халăха кăтартас майпа, 7 хутчен художествăллă выставка пулса иртрĕ. РСФСР тата Чăваш АССР искусствисен тава тивĕçлĕ деятелĕ М. С. Спиридонов çырнă картинăсемпе портретсенчен чи лайăххисем: «Чăваш хĕрĕ—сержант Сергеева», «Фермăсен заведующийĕ», «Совет Союзĕн Геройĕ Орлов» тата ытти картинăсем, Атăл тăрăхĕнчи художниксен куçса çÿрекен выставкинче (Горький, Хусан, Саратов хулисенче) паллă вырăн йышăнса, 1-мĕш степеньлĕ диплом илме тивĕçлĕ пулчĕç. Чăваш АССР искусствисен тава тивĕçлĕ деятелĕ Н. К. Сверчков—«Бронепоезд — Чăваш комсомолĕ» ятлă картина, Сталин портречĕ, Атăл пейзажĕсем çырнă.

Чăваш композиторĕсен ĕçĕсем çинчен те çавнах калама пулать. Вĕсем пирĕн нумайăшах мар. Анчах вăрçă пуçланнăранпа вĕсем çĕр ытла тĕрлĕрен юрăсемпе ытти музыкăллă произведенисем çырнă. Чăваш АССР искусствисен тава тивĕçлĕ деятелĕсем—В. П. Воробьевпа Г. Г. Лисков çĕнĕ юрăсем пачĕç. Çавăн пекех çамрăк композиторсем—Г. Хирбю, Ф. Лукин, Г. Лебедев творчество тĕлĕшĕнчен малалла ÿссе пычĕç. Вĕсен произведенийĕсем пирĕн государство ансамблĕпе Радиокомитет çумĕнчи юрă ансамблĕн репертуарĕсене çирĕппĕн кĕрсе вырнаçрĕç. Вĕсене художествăллă пултарулăх коллективĕсемпе уйрăм юрăçсем те юратса юрлаççĕ. Юрăсемсĕр пуçне, композиторсем пысăк формăллă произведенисем çыраççĕ. Сăмахран. Г. Хирбю марш, симфонин малтанхи пайне тата Осиповăн «Айтар» пьеси тăрăх çыракан «Сентиерпа Пинерпи» ятлă оперăн пĕр пайне çырса пĕтерне. Вăлах тата кантата çырать. Ф. Лукин академи театрĕ лартакан «Ялта» спектакль валли çĕнĕ музыка тата сĕрме купăспа вылямалли элеги çырнă. Г. Лебедев Айзманăн пĕр пайлă çĕнĕ водевилĕ тăрăх «Хĕвеллĕ кунсем» ятлă музыкăллă комеди çырнă. Орлов-Шузьм оркестрпа хор юрламалли «Туй» ятлă пысăк произведени çырнă, халь вăл кантата çырса пĕтерет.

Вăрçăн малтанхи çулĕсенче пирĕн театрсемпе драмкружоксем чăвашла пьесăсем çук тесе ÿпкелешетчĕç. Юлашки вăхăтра ку тĕлĕшрен те малалла утăм тунă теме пулать. Айзманăн «Лиза Короткова», «Хĕвеллĕ кунсем», П. Н. Осиповăн «Тăван çĕршывра», Аркадий Ĕçхĕлĕн «Çĕрпе кăвак тÿпе» ятлă пьесисем пирĕн драматургсем халăх валли паян кун кирлĕ произведенисем çырма тытăннине кăтартса параççĕ. Анчах пирĕн драматурги çавах та пурнăçран кая юлса пырать-ха.

Пирĕн халăх искусствăна хĕрÿллĕн юратать. Республикăри икĕ пине яхăн шутланакан художествăллă пултарулăх кружокĕсем халăх хушшинчи талантсене пăхса ÿстерес тĕлĕшрен чăн-чăн вучах пулса тăраççĕ. Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче кăна пирĕн республикăра ултă хутчен художествăллă пултарулăх смотрĕсем пулса иртрĕç.

Художествăллă пултарулăх хальхи пуян та тĕлĕнмелле событисемпе тулса тăракан кунсенче халăхăн телейне, ун аслă ĕмĕчĕсемпе шухăш-кăмăлне уççăн кăтартса парать. Халăх хушшинчен тухнă талантсем, паттăр Хĕрлĕ Çарăн аслă çĕнтерĕвĕсемпе хавхаланса, хамăрăн тăван çĕршыва, большевиксен партине, халăхсен çулпуçне аслă Сталина пĕтĕм чун-чĕререн юратнине тарăнăн кăтартса пама çĕнĕрен çĕнĕ паха формăсем тупаççĕ.

Большевиксен партипе Совет правительстви тăрăшнипе пула, чăваш халăхĕн искусстви çулран çул ÿссе, чечекленсе пырать. Пирĕн çитĕнÿсем сахал мар. Анчах эпир вĕсемпе лăпланса лармалла пултараймастпăр. Пирĕн искусство учрежденийĕсен ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем те нумай-ха. Культурăлăх çитменни, идейăпа политика тĕлĕшĕнчен тивĕçлĕ таранах çÿлте тăманни, çавăн пекех художествăллă мастăрлăха кирлĕ таран алла çавăрса илейменни,—çаксем ĕнтĕ искусство работникĕсен малалла ÿсес çулĕ çинче чăрмав пулса тăраççĕ. Халăх творчествине пухса тĕпчес ĕç те начар тăрать-ха. Республикăри ĕççыннисем хушшинче, уйрăмăнах ача-пăчасем хушшинче спектакльсем, концертсем иртерессине те нумай лайăхлатмалла. Театрсен, художествăллă пултарулăх коллективĕсен репертуарне чăвашла çырнă паха, çĕнĕ произведенисемпе пуянлатас тĕлĕшпе ырми-канми ĕçлемелле. Эпир çакна çирĕп шанса тăратпăр: чăваш искусствине чĕререн савса ĕçлекенсем, пирĕн юратнă Тăван çĕршыв çак аслă вăрçăран çĕнтерÿллĕн тухнипе хавхаланса, хăйсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене кĕске вăхăтрах пĕтерĕç, чăваш халăхĕн искусствине тата çÿллĕрех пусăма çĕклĕç.

16 поляка суда пани çинчен

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри радио тăрăх ăнлантарса тăракан Стилл, Мускавра çак çитес кунсенче 16 поляка суд тăвасси çинчен пĕлтерсе, çакна палăртнă: Окулицкий генерал нумай вăхăт хушши фашистсем майлă ĕçлесе тăнă. Окулицкий генерал 1943 çулта Англи хĕçпăшалне тата тĕрлĕ япаласене Иранран Совет Союзне тăратмашкăн Каспи тинĕсĕнче тумалла пулнă базăна тума нумай чăрмантарнă. Малалла Стилл çакна кăтартса панă: Окулицкий Совет Союзне хирĕç тăракан «ЗВЗ» ятлă вăрттăн организацин руководителĕ пулса тăрать. Çав организаци советсене хирĕç алла хĕçпăшал тытса кĕрешнĕ. Вăл юлашки виçĕ çул хушшинче поляксен темиçе çар çыннине вĕлернĕ, мĕншĕн тесен çав çар çыннисем Совет Союзĕпе килĕштерсе туслăн пурăнасшăн пулнă.

ВЕРХОВИНА ÇЫННИСЕНЕ ТИСКЕРРĔН АСАПЛАНТАРСА ВĔЛЕРНĔ ФАШИСТЛА ПОЛЯК БАНДИНЕ ПĔТЕРСЕ ТĂКНĂ

ВАРШАВА, июнĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Польпресс агентстви «Народовы силы збройне» ятлă организацин Станислав Сокол ертсе пынă террорла бандине пĕтерсе тăкни çинчен общество хăрушсăрлăхĕн министерствинчен илнĕ материалсем тăрăх çапла пĕлтернĕ:

«Соколăн террорла бандинче 200 çын ытла шутланнă, вĕсен автоматла хĕçпăшал пулнă. 1945 çулхи март уйăхĕнчен пуçласа, банда гражданла милицие темиçе хут та тапăннă тата милиционерсене вĕлернĕ. Çавăн пекех банда демократиллĕ партисен членĕсене те вĕлернĕ. Июнĕн 6-мĕшĕнче çав банда Верховина ялне тапăннă. Унта вăл 194 çынна, вăл шутра 64 ачана, тискеррĕн вĕлернĕ.

Çав бандăна пĕтерес шутпа оперативнăй группа янă. Июнĕн 1-мĕшĕнче вара ăна пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкнă. Вĕлернĕ 166 бандит хушшинче шайка пуçлăхĕ Станислав Сокол тата унăн помощникĕ «капитан» Шары пур. 41 бандита чĕрĕллех ярса илнĕ. Тытса илнĕ хĕçпăшал хушшинче 5 йывăр пулемет тата 5 çăмăл пулемет пур.

АРЦЫШЕВСКИЙ «ПРАВИТЕЛЬСТВИН» ÇАРĔСЕМ ÇИНЧЕН

ЛОНДОН, июнĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). «Трибюн» журнал Лондонра Польпресс агентствин корреспондентне Ягодзинские тытса хупни çинчен каланă май çапла çырать: Çапла хăтланни питĕ усал ĕç пулса тăрать, хальхи вăхăтра. Европăра вăрçă пĕтнĕ хыççăн, ăна тÿрре кăларма нимĕнле май та çук. Анчах апла пулин те, Арцышевский «правительстви»не унăн аллинчи хĕçпăшаллă вăйсен ретне çĕнĕ çынсем пухма ирĕк панă. вара вăл чăнахах та хăйĕн çарне пĕрмаях ÿстерсе пырать. Ыйтасчĕ: кампа çапăçма хатĕрленет-ши çав çар? Мĕншĕн вăл çара халĕ, Германие пуçĕпех çĕнтерсе тăкнă хыççăн, Англире пурăнма ирĕк параççĕ? Çав çарсене çав тери нумай вăхăт хушши ачашласа тăни çине вырăссем мĕнле куçпа пăхнине ăнланса илме йывăрах мар ĕнтĕ. Вырăссем пире шанмасăр иккĕленсе тăнипе ытларах ÿстерес мар тесен, Польшăн Лондонри «правительствин» çарĕсене пулăшса тăрассине пăрахма тахçанах вăхăт çитнĕ ĕнтĕ.

АРЦЫШЕВСКИЙ АГЕНЧĔСЕМ ФРАНЦИРИ ПОЛЯКСЕН АЧИСЕНЕ ВĂРЛАНĂ

ВАРШАВА. июнĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Польпресс агентствин Парижри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх. Парижри префектурăн киле таврăнас текен поляксене вырнаçтарас тĕлĕшпе ĕçлесе тăракан отделĕ Польшăн Лондонри «правительствин» агенчĕсем пулса тăракан поляк офицерĕсем çинчен жалоба панă. Çав офицерсем Париж варринче тăр-кăнтăрлах нимĕçсен Бухенвальдри концентрациллĕ лагерĕнчен ирĕке кăларнă поляксен ачисене вăрланă. Вара полици çав ачасене вăрлакансем ларса пынă машинăна тытса чарнă. Çав машина çинчи шофер—поляк салтакĕ — полицейскисене хăйĕн документне кăтартнă. Вăл документ Польшăн Лондонри «правительствин» Парижри миссийĕ пачăкер пулнă. Ĕçе йĕркеленĕ чухне çав шофер çапла каласа кăтартнă: мана çав ачасене Польшăн Лондонри «правительствин» офицерĕсем Бесстерти паллă казармăна илсе кайма приказ панă. Çав казармă вăл Арцышевский агенчĕсем хăйсем майлă çавăрнă поляк салтакĕсен пĕр çĕре пухăнмалли пункчĕ пулса тăрать.

РИББЕНТРОПА ТЫТНĂ ХЫÇÇĂН

ЛОНДОН. июнĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Англин информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх. июнĕн 15-мĕшĕнче Риббентропа Люнебург хулинчи аэродром çинче самолет çине лартнă та допрос тума илсе кайнă. Хăш вырăна илсе кайни çинчен каламан. Риббентропа вăйлă хурал сыхлать.

ВЕНГРИН ПРЕМЬЕР-МИНИСТРĔ ПУЛНĂ ИМРЕДИЕ ТЫТНĂ

НЬЮ-ЙОРК. июнĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви Висбаденран пĕлтернĕ тăрăх. 12-мĕш арми группин штабĕ Венгрин премьер-министрĕ пулнă Имредие тата ту-сăрт концернин—Германи промышленноçĕн представителĕ пулнă Фликă тытса арестленĕ.

США КОНГРЕСĔНЧЕ СУЙЛАВÇĂСЕНЧЕН ИЛЕКЕН НАЛОГА ПĂРАХĂÇА КĂЛАРАССИ ÇИНЧЕН СÿТСЕ-ЯВНИ

ВАШИНГТОН. июнĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Представительсен палати суйлавçăсенчен илекен налога пăрахăçа кăларасси çинчен сÿтсе-явнă. Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсенче çав налога тÿлени президента тата сенаторсемпе конгресс членĕсене суйланă çĕре хутшăнма право парать. Представительсен палати çав налога пĕтермелли закона йышăннă та ăна малалла пăхса тухма сената янă. Çав закон проекчĕшĕн представительсен палатинче 250 депутат сасăланă, 105 сасă хирĕç пулнă. Хирĕç тăнисем — представительсен палатинчи реакционерсем.

Çичĕ штатра çав налога тÿлемен гражданисене суйлавсене хутшăнтармаççĕ. Налогне суйлавсем пуличчен тахçан малтанах тÿлесе хумалла. Çапла майпа чухăн пурăнакан темиçе миллион халăх суйлава хутшăнмасăр тăрса юлать. Çакăн пек даннăйсем пур: 1940 çулхи суйлавсенче çав налог çук штатсенче суйлава мĕнпур суйлавçăсен 70 процентĕ хутшăннă, çав налога тÿлеттерекен штатсенче суйлава суйлавçăсен 25 процентĕ ытларах кăна хутшăннă.

Представительсен палати çак законăн проектне ĕнтĕ темиçе хут та йышăннă. анчах та ку таранччен ăна сенат кашнинчех йышăнмасăр сирсе тăнă.

НАЦИОНАЛ-ЛЕЙБОРИСТСЕН ОРГАНИЗАЦИНЕ САЛАТСА ЯНĂ

ЛОНДОН, июнĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх. июнĕн 14-мĕшĕнче Лондонра Англири национал-лейбористсен организацийĕн канашлăвĕнче çав организацие салатса яма йышăннă. Çак решение организацин 5 членĕ, парламент кандидатне тăратнăскерсем, Черчилль правительствине пулăшма килĕшнĕ пирки йышăннă. Национал-лейбористсен организацине 1931 çулта «наци правительствин составĕнче политикăллă тĕп партисене пурне те пĕрлештерес» тесе организациленĕ пулнă. Çав организацин тĕп деятелĕнчен пĕри—Англин Канадăри верховнăй комиссарĕ, премьер пулса ĕçленĕ Макдональдăн ывăлĕ Малькольм Макдональд шутланнă.

ЛИВЕРПУЛЬРИ РАБОЧИСЕН ДЕМОНСТРАЦИЙĔ

ЛОНДОН. июнĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ Ливерпульрен пĕлтернĕ тăрăх. июнĕн 13-мĕшĕнче унта çар заводĕнче ĕçлекен рабочисен демонстрацийĕ пулнă. Рабочисем, вăрçă хыççăн ĕç пама ыйтса, урамсем тăрăх утса тухнă. 3.000 арçынпа хĕрарăм «Нэпир» фирмин авиаци заводĕ патĕнче демонстраци тума пуçланă. Урамсенче демонстрантсем çумне ытти предприятисенчи рабочисем те хутшăннă. Демонстрантсем «Нэпир» фирмăра ĕçлекен рабочисен шутне 10.000-рен 2.000-е çити чакарма шутлани çинчен влаçсене пĕлтернĕ. Власть представителĕ çапла каланă: ку ыйтăва пăхса тухма Англин суту-илÿ министерствине паратпăр, тенĕ.

ДЖАВАХАРЛАЛ НЕРУНА ТĔРМЕРЕН КĂЛАРНĂ

ЛОНДОН, июнĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС) Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Индири наци конгресĕн лидерне Джавахарлал Неруна тĕрмерен кăларнă.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

АМЕРИКА АВИАЦИЙĔ, ЙЫШЛĂН ВĔÇСЕ КАЙСА, ОСАКА ХУЛИНЕ ТАПĂННĂ

ЛОНДОН, июнĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС) Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен Лăпкă океанăн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен пĕрлешÿллĕ командованийĕн штабĕ çапла пĕлтерет: Борнео утравĕ çинче Австрали çарĕсем Бруней хулине пĕтĕмĕшпех туртса илнĕ, унтан вĕсем японецсенчен çав хуларан çурçĕртерехри района тасатнă.

Филиппин утравĕсен шутĕнче тăракан Лусон утравĕ çинче Америка çарĕсем Кагаян улăхĕнче 22 миля малалла кайнă.

ВАШИНГТОН, июнĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен Лăпкă Океан çинчи флочĕн штабĕ çапла пĕлтерет: «Вĕçекен крепость» йышши хăватлăран та хăватлă 520 бомбардировщик июнĕн 15-мĕшĕнче Японири Осака хулине тапăннă. Хула çине фугаслă тата вут тивертекен бомбăсем пăрахнă.

Сулйĕр строительстви малалла пырать

Сулйĕр строительствин çирĕмкунлăхĕнче Красноармейски район пысăк ĕçсем тунă. 884 кубометр хăйăр, 163 кубометр йывăç хатĕрлесе турттарнă. Хатĕрленĕ 890 кубометр чулран 654 кубометрне турттарса кăларнă. Çавăн чухлĕ стройматериалпа 24,5 километр тăршшĕ мăн çула, 4 кĕпере юсанă. Халĕ шоссе çулне юсаççĕ, çĕнĕрен 4 кĕпер тăваççĕ.

Сулйĕр строительствине районри чылай колхозсем активлăн хутшăннă. Уйрăмах «Оборона», «Правда», «Коммунар», «Знамя колхозника», «Победа», «Партизан» тата «Сила» колхозсем лайăх ĕçленине палăртмалла. Ку колхозсем сулйĕр ĕçĕн планĕсене тултарнă.

Çирĕмкунлăх вăхăтĕнче районра кашни кун 200 çын лашапа, 500—600 çын çуран ĕçленĕ. Çак кунсенче те унтан кая мар ĕçлеççĕ. Районра сулйĕр строительстви малалла пырать.

Т. И.

Пĕчĕк фельетон

КЛУБ ТĂВАКАНСЕМ

Калинино райцентрĕнчи çамрăксем ĕçрен пушаннă хыççăн касхине уçăлса çÿреме урама тухнă.

—Шп!—шăхăрнă пĕр çамрăкĕ урамра. Çавăнтах тата тепĕр çамрăкĕ хыттăн кашкăрса юрланă.

Ялăн тепĕр вĕçĕнче те кăшкăрашнисем тата шăхăрса юрланисем илтĕннĕ.

Çак çамрăксем хушшинчех район центрĕнчи клуб директорĕ П. Егоров та пулнă. Вăл та. ыттисенчен юлас мар тесе пулас. хытă кăшкăрнă. хушăрап тата шăхăрса та илнĕ.

— Ара, мĕн пулнă сире. ма клуба каймастăр?—тесе калас килчĕ ман, вĕсем клуб умĕнчен иртсе кайнă чух, анчах та ыйтма хăю çитерейменĕ.

Çапла иртереççĕ Калинино çамрăкĕсем хăйсен пушă вăхăтне.

Калининăра район пулни 6 çул тулса 7 çул çине кайрĕ. Район пуçланнă вăхăтра çураланă ачасем кĕçех шкула кайма, клуба çÿреме пуçлаççĕ ĕнтĕ. Анчах та çав ачасем «мĕншĕн пирĕн клуб япăх» тесе ыйтсан, вĕсене мĕн каласа ăнлантармалла-ха? «Район çĕнĕ пирки, лайăх клуб тăваймарăмăр-ха»,—тесе те ăнлантараймăн.

Каламасăрах паллă, партипе правительство халăх культурине ÿстерес ĕçе калама çук пысăк хак параççĕ, ăна валли нумай укçа-тенкĕ уйăрса параççĕ. Калининăри клуб пуçлăхĕ хăйĕн айăпне çапах та:

— Клуб юсама укçа çук,—тесе ăнлантарса парасшăн.

Ку пĕрре те тĕрĕс мар. Калинино районĕн центрĕнче клуб пур, анчах ăна юсас пулать, кирлĕ сăн-сăпат кĕртмелле. Кунта вара ăна юсама мар, çĕмĕрме тытăнчĕç.

Чи малтанах тăррине илсе антарчĕç, клуб тавралла тытнă картана сÿтсе пăрахрĕç. карта йывăççисене кам ăçталла пĕлнĕ, унталла сĕтĕрме пуçланă. Хăшпĕр çынсем каланă тăрăх, сĕтĕрессе халĕ те сĕтĕреççĕ тет пулас...

Часах ак Чăваш республики 25 çул тултарнă кун çывхарать. Ку кун чăваш халăхĕшĕн чи пысăк та чи чаплă уяв. Çавăнпа та республикăра пур çĕрте те уяв умĕнхи хĕрÿллĕ ĕçсем пыраççĕ. Калининăра та кун çинчен чылай малтан калаçма пуçланăччĕ. Район Совечĕн исполкомĕ хăйĕн заседанийĕнче «уяв тĕлне çĕнĕ клуб туса пĕтеретпĕр» тесе йышăнпăранпа чылай вăхăт иртрĕ ĕнтĕ. Анчах решенисем хут çинчех юлчĕç, çĕнĕ клуб мар, киввине те юсама тытăнмарĕç.

Клуб директорĕ Егоров юлташ клуба пырса та пăхмасть.

КАЛИНИНĂСЕМ.

ÇĔНĔ КĔНЕКЕСЕМ

Чăвашсен Государство Издательстви кĕçĕн çулхипе вăтам çулхи ачасем валли çакăн пек çĕнĕ кĕнекесем кăларчĕ:

1. Н. И. Полоруссов-Шелепи — АЧАПĂЧА САВВИСЕМ. Кĕнекене чăваш халăх поэчĕн хăй пурăннă вăхăтра кĕçĕн çулхи ачасем валли çырнă пур сăввисемпе поэмисене те кĕртнĕ.
2. Хветĕр Уяр—КУÇУКПА ХУРАÇКА. Кĕнеке «Книжки-малышки» серипе тухнă. Кĕнекене граждан вăрçи вăхăтĕнче Вăтам Атăл таврашĕнче пулса иртнĕ ĕç çинчен çырнă калава кĕртнĕ.

Асăннă кĕнекесене 5.000 экз. тиражпа кăларнă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Шупашкарти энергетика техникумĕн „Чăваш Коммуни" хаçатра июнĕн 3-мĕшĕнче пичетленнĕ пĕлтерĕвне çапла тÿрлетсе вуламалла:
„Техникума 14 çултан пуçласа 30 çула çитнисене илеççĕ.
Техникума илмелли экзаменсем сентябрĕн 11-мĕшĕнче 20-мĕшĕ хушшинче пулса иртеççĕ".
Дирекци.

Шупашкарти табак фабрикине çакăн пек работниксем кирлĕ: учетчиксем, табельщик, жестянщик, плановик, кассир, бухгалтер, делопроизводитель, снабжени тĕлĕшпе ĕçлекен работник, конюх, дворник, вахтерсем, мĕнпур специальноçсемпе — ученниксем.
Фабрикăра столовăй тата апат-çимĕç сутакан ларек пур.
Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Чувашская, 69, Табачная фабрика.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместителĕн — 2—89, секретариатăн — 4—26, пропаганда пайĕн — 2—89, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленность пайĕн — 3—97, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, рабселькорсен пайĕн — 0—67, издательство конторин — 0—23.

НТ 00360 Типографи № 1 Управлениг полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. ф. 6. 59 42 п. л. Тираж 16.000